# Кашни сăмах—

Чăваш кĕнекине хĕрлĕ ĕне ҫинĕ, тет.
(Авалхи каларăш)

Шурă хут ҫине калемпе те хурапа ҫырнă Аваллăх кĕнеки упранса юлайман пирĕн халăхăмăрăн. Авалхи саманасенче пăлхар-чăваш ăрăвĕсен вăрăм историйĕнче тăтăшах вăрҫăллă-ҫуйăллă вăхăтсем киле-киле тухнă. Хаяр вăрҫăсем кĕрленĕ вăхăтра халăх ĕмĕрсем хушши пухса пынă ăс-хакăлпа культура мулĕ пĕрре мар вутра ҫунса кĕлленнĕ. Чăваш кĕнеки те, ахăртнех, ҫавнашкал вăрҫă-харҫăллă саманара ҫунса-кĕлленсе ҫилпе вĕҫнĕ пулмалла. Ҫавăншăн эрленсе, халăхăмăр: «Чăваш кĕнекине хĕрлĕ ĕне ҫинĕ»,— тенĕ.

Халăхăмăрăн ăс-хакăл ҫўпҫинче чăвашсен те авал хăйсен кĕнеки пулни ҫинчен калакан халап-юмахсем пайтах сыхланса юлнă. Вĕсенче истори чăнлăхĕпе халап пĕр ҫăмхана ҫăмхаланса кайнă. Апла пулсан та, халăхăмăрăн авалхи кĕнеке-ҫырулăх культурине тĕпчеме кунашкал халапсем те чылай пулăшаҫҫĕ.

Куйбышев облаҫĕнчи Шунтал районĕнчи Ухинкел ялĕнче пурăнакан тĕне кĕмен ҫу чăвашсем чăваш кĕнеки пирки ҫакăн пек кăсăк халап астуса юлнă. Ăна эпир 1984 ҫулхи ăслăлăх экспедицийĕнче ҫырса илтĕмĕр.

Ĕлĕк-авал чăвашсем хальхи пек сапаланчăк пурăнман. Вĕсем пĕр ҫĕрте чăмăртанса пурăннă, пĕрпĕрин патне кайса-килсе тăнă. Пурте пĕр тан, пĕрешкел йăла-йĕрке тытса пурăннă. Авалтан килекен йăласене ватă мăчавăрсем ҫамрăксене вĕрентсе пынă. «Авалхи йăласене ан пăрахăр, ҫĕнĕрен йăла ан кăларăр»,— тенĕ ваттисем. Ҫавăнпа авал чăваш йăлисем ламран-лама улшăнмасăр куҫса пынă.

Пурăна киле чăваш халăхĕ йышланса пынă, ҫĕршыв хĕсĕнсе ҫитнĕ. Унтан тата ют халăхсем вăрҫăпа тапăна-тапăна кĕнĕ. Вара чăвашсем тĕрлĕ ҫĕрелле саланса кайнă та йăхсемпе ăрусем пĕр-пĕринпе час-час курнăҫайман. Малтанхи вăхăтра ҫулталăкра пĕрре аслă кĕлле пухăнса канашланă, каярахпа виҫĕ ҫулта пĕрре, унтан вара пилĕк ҫулта, ҫичĕ ҫулта пĕрре кăна аслă кĕлле пухăнма пуҫланă. Пĕр-пĕринчен аякра пурăнакан чăвашсен йăла йĕркисем улшăнса кайнă, кĕлĕ сăмахĕсем пăтрашма тытăннă. Малтан калассине кая хăварма, кайран калассине малтан калама пуҫланă. Айван кĕлĕсене аслă турă йышăнми пулнă. Ҫанталăксем типĕ тăма пуҫланă, ҫĕр кăкри тырпул ҫуратми пулнă.

Пурнăҫ йывăрланса пынăран, чăваш ваттисем аслă кĕлĕ пухса канаш тунă та авалхи йăласене, кĕлĕ сăмахĕсене хурăн хуппи ҫине ҫырма шутласа хунă. Хурăн хуппи ҫине ҫырни ҫухалмасть, тенĕ. Аслă кĕлле пухăннă ҫынсем хурăн хуппи касса шуратнă та мĕнле йăла хыҫҫăн мĕнле йăла ирттермеллине, мĕнле кĕлĕ хыҫҫăн мĕнле кĕлĕ каламаллине, хăш ҫулта миҫе уйăх шутламаллине йăлт ҫырса хунă. Сăмахĕсене тăмхапа ҫырса тухнă та хурăн хуппине кĕнекелесе ҫĕлесе хунă. Кĕнекене аслă кĕлĕ картинче пысăк шурă чул сĕтел ҫинче упранă. Ăна аслă мăчавăр хăй сыхласа-упраса тăнă.

Унта-кунта пурăнакан мăчавăрсем, кĕлĕ сăмахĕсене манса кайсан, мĕн йăла хыҫҫăн мĕн тумаллине астумасан, аслă кĕлĕ вырăнне кайнă та ҫав кĕнекерен вуласа пĕлнĕ.

Анчах кĕнеке тунă хыҫҫăн халăх турра сахалрах та сахалрах чўклеме пуҫланă. Авал, кĕнеке пуличчен, йăла-йĕркесемпе кĕлĕсене манас мар тесе, мăчавăрсем халăха тăтăш чўклемесем ирттерме пухса тăнă. Халĕ вара йăла-йĕркесене манас хуйхă пĕтнĕ те, кĕлĕсемпе чўксене сайрарах тума тытăннă.

Хăйне манма пуҫланăшăн турă халăха ҫилленнĕ те чăваш кĕнекине ҫиме хĕрлĕ ĕне кăларса янă. Аслă мăчавăр ҫывăрса выртнă вăхăтра хĕрлĕ ĕне кĕлĕ картишне пырса кĕнĕ те чăваш кĕнекине пĕтĕмпех ҫисе янă. Чăвашсем ҫĕнĕрен кĕнеке ҫырасран хăраса, турă вĕсене тăмхаллă ҫырăва та мантарнă. Ҫавăнтан вара чăвашсем хăйсен йăх тăмхисене кăна астума пуҫланă, авалхи тĕне те, йăла-йĕркесене те манма тытăннă.

Паллах, ку халап — илемлĕ легенда кăна. Анчах кирек мĕнле легенда та сăлтавсăр ҫуралмасть, вăл яланах историре пулнă паллă событисене миф тĕкĕрĕ ҫинче ҫутатса парать. Миф чатăрне сирсе ярсассăн, ҫак халапра та историре чăн-чăнах пулнă япаласене тупса палăртма пулать.

Истори чăнлăхĕ ҫак халапра та аванах палăрса юлнă.

Шăп ҫакнашкал халап удмуртсем хушшинче те ҫўрет иккен. Ăна иртнĕ ĕмĕр вĕҫĕнче Н. Г. Первухин ҫырса илнĕ. Удмуртсем ку халапа пăлхар-чăвашсенчен илни те иккĕлентермест. Апла пулсан, ку халап Атăлҫи Пăлхар патшалăхĕ саманинчех анлă сарăлни палăрать.

Удмуртсен халапĕнче те, чăваш халапĕнчи пекех, ватă ăсчахсем кĕнекене шурă чул ҫинче упраҫҫĕ. Ҫак пĕчĕк деталь халапа ытахальтен кĕмен. Вăтам Азири мăсăльман халăхĕсен мичĕт е медрессе картишĕсен варринче коран хума ятарласа тунă пысăк чул такансем пулнă. Ҫавнашкал пысăк чул такана халĕ те Самарканд хулинчи Биби-ханум мичĕчĕн картишĕнче курма пулать. Чăвашсен мăн аслашшĕсем ҫавнашкал такансене Атăлҫи Пăлхар патшалăхĕ саманинче Пўлерти, Пăлхарти тата ытти хуласенчи мăсăльман мичĕчĕсен картишĕнче курма пултарнă.

Удмуртсем те, чăвашсем те авалхи кĕнекене тăмха ҫырăвĕпе ҫырни ҫинчен каласҫĕ. Тĕпчевҫĕсем вара чăваш тăмхисемпе авалхи тĕрĕк халăхĕсен руна ҫырулăхĕн саспаллийĕсем пĕрешкел пулни ҫинчен ҫыраҫҫĕ. Халапри ҫак пĕчĕкҫĕ деталь чăвашсен мăн

# хăех юмах

Чăваш чĕлхинче çыр, вула, сăмахсем пур, вĕсем пирĕн чĕлхере сахалран та икĕ пин çул ытла пурăнаççĕ. Апла пулсан, чăваш халăхĕн никĕсĕнче тăракан пăлхар-сăвар йăхĕсем икĕ пин çул ытла авалах çырма-вулама пĕлнĕ теме май пур. Эппин, кĕнеке сăмах та пулнă-тăр вĕсен?

Çапла, пулнă. Пăлхар-сăварсен авалхи несĕлĕсем, хуннсен союзне кĕнĕ огур (хальхилле каласан — «вăкăр») йăхĕсем икĕ пин çул ытла авал, пирĕн эра пуçланиччен, китай халăхĕсем урлă кĕнекепе паллашнă. Авалхи китай йăхĕсем патне кĕнеке искусстви пĕр виçĕ пин çурă çула яхăн авал Инди урлă пырса тухнă. Инди халăхĕсем çырулăхпа шумерсем урлă паллашнă. Пилĕк пин çул авал Месопотамире пурăннă шумерсем çырулăх ăсталăхне авалхи Египет халăхĕсенчен вĕреннĕ. Акă мĕнле вăрăм иккен çырулăхпа кĕнекен историри çул-йĕрĕ!

Анчах та эпир хăнăхнă «шурă ана çине хура вăрлăх акса» тунă, станпа пусса кăларнă кĕнекен ĕмĕрĕ вăрăм мар. Çырулăх ĕмĕрне пĕр кунпа танлаштарас пулсан, кĕнеке ĕмĕрĕ унта пĕр чĕрĕм тăршшĕ вăхăт та йышăнаймасть. Хальхи кĕнекене эпир, чăвашсем, пуçласа XVI ĕмĕр вĕçнелле вырăс миссионерĕсен аллинче курнă. «Кĕнеке» сăмаха та вырăс чĕлхинчен çак вăхăтра кăна илнĕ. Пирвайхи чăвашла кĕнеке 1800-мĕш çулта пичетленсе тухнă. Вăл Еремей Рожанский вырăсларан куçарнă «Катехизис» пулнă.

Ку чăнах та çапла. Анчах чăвашсен мăн аслашшĕсем — пăлхар чĕлхиллĕ халăхсем «кĕнеке» сăмаха икĕ пин çул авалах пĕлнĕ иккен. Славян чĕлхисене кьнигь (кĕнигĕ) сăмах авалхи пăлхар йăхĕсенчен сăмах «юланутçă» тенине пĕлтерет. Оногур-пăлхарсем (вĕсемех сабирсем) çуллахи вăхăтра Иртыш шывĕпе Обь пĕрлешнĕ тăрăхра кĕтӳ кĕтсе çӳренĕ. Кунта вăл вăхăтра угор чĕлхиллĕ халăхсем — хальхи хантсемпе мансисен тата венгрсен мăн аслашшĕсем пурăннă. Угорсен пĕр ушкăнĕ оногур-пăлхарсен союзне кĕнĕ те хăйсен малашнехи шăпине пăлхарсемпе пĕр тĕвве çыхнă. Сăмах май каласан, Çĕпĕр сăмах сабирсен ятĕнчен пулса кайнă. Авал вырăссем хантсемпе мансисене югорсем (вырăсла югра) тенĕ. Югра сăмах та, венгр халăхĕн ячĕ те оногур йăх ятĕнчен аталанса кайнă. Çак халăх ячĕсем авалхи пăлхарсемпе угорсем хушшинчи çыхăнусем чăвашсен мăн аслашшĕсем Çĕпĕр çĕрĕсем тăрăх куçса çӳренĕ чухнех пуçланса кайнине лайăх кăтартса параççĕ.

Оногур-пăлхарсем тата вĕсен союзне кĕнĕ венгрсен несĕлĕсем IV ĕмĕрте Каспи тинĕсĕпе Хура тинĕс хушшинчи çеçенхирсене пырса тухаççĕ. Кунта вĕсем иран чĕлхипе калаçакан алан йăхĕсене тĕл пулаççĕ. Пăлхар йăхĕсем, угор чĕлхиллĕ венгрсемпе тата хальхи осетинсен мăнаслашшĕсемпе пĕрлешсе, пирвайхи феодал патшалăхĕ йĕркелеççĕ. Кубрат хан чăмăртанă çак патшалăх историре Аслă Пăлхар е Ылтăн Пăлхар ятпа паларса юлнă. Сири историкĕ Захариа Ритор çырса хăварнă тăрăх, Çурçĕр Кавказра пурăнакан пăлхар-сăвар йăхĕсем VI ĕмĕрĕн варринче кĕнеке çырса кăларни паллă. Çак факт чĕлхере те паларса юлнă.

Çурçĕр Кавказра пурăннă тапхăрта авалхи пăлхар чĕлхинчи куэнеке сăмах кăшт улшăнса çĕнелнĕ те кĕнӳге евĕрлĕрех янăрама тытăннă. Авалхи пăлхарсен кĕнӳге сăмах венгрсен чĕлхине кĕрсе çирĕпленнĕ. Сасă кӳлепине пăхсан, ку сăмах венгрсен

Дунай çине куçса кайнă пăлхар ăрăвĕсем хăйсене уйрăм патшалăх йĕркелеççĕ, анчах та часах, ырăнти славян чĕлхиллĕ халăхсемпе хутшăнса, хăйсен чĕлхине манса каяççĕ. Дунай çинчи славянланса кайнă пăлхарсем хальхи болгар этносĕн пĕр тĕп пайĕ пулса тăраççĕ. Дунай çинчи болгарсем Византи патшалăхĕпе тачă çыхăну тытма пуçлаççĕ. Вĕсем 865 çулта христианство тĕнне йышăнаççĕ. Çак тапхăрта болгарсене хутла вĕрентсе çутта кăларас енĕпе Кирилпа Мефодий просветительсем çĕнĕ славян çырулăхĕ (глаголица, каярахпа — кириллица) туса хураççĕ, тĕн кĕнекисене кивĕ славян чĕлхи çине куçарса çыраççĕ. «Кĕнеке» сăмах историйĕнче çак событисем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Дунай çине куçса кайнă пăлхарсем, славян чĕлхипе калаçма тытăннă пулин те, хăйсен сăмахĕсене те пачах манса кайман. Хальхи болгар чĕлхинче те хĕрĕх-аллă авалхи пăлхар сăмахĕ упранса юлнă. Вăл шутра кьнигь (кĕнигĕ) «кĕнеке» сăмах та пур.

Киев Руçĕ 988 çулта Византи урлă Христос тĕнне йышăнать. Христианствăпа пĕрле Киев Руçне кĕнеке культури те пырса кĕрет. Çырулăхпа кĕнекелĕх Византирен Руçе тӳрремĕн мар, Дунай болгарĕсен урлă пырса тухнă. Авалхи вырăссем болгарсенчен глаголицăпа кириллица çырулăхĕсене, кĕнеке культурине йышăннă. Вĕсемпе пĕрле болгар чĕлхинчен авалхи вырăс чĕлхине кьнигь (кăнигă) сăмах та пырса кĕнĕ.

Унтанпа нумай вăхăт иртнĕ. Вырăс чĕлхинче сăмах, хăйĕн сасă кӳлепине улăштарса, книга форма йышăннă. Кайран-кайран, чăвашсем хăйсен ирĕкĕпе Вырăс патшалăхне кĕрсен, кĕнеке сăмах вырăс чĕлхинчен чăвашсем патне тепĕр хут таврăнать.

Вӑтам Атӑл тӑрӑхне куҫса килнӗ пӑлхар-сӑвар йӑхӗсен те кӗнекепе ҫырулӑх культури ҫухалман. Ҫакна эпир руна саспаллийӗсемпе ҫырнӑ археологи палӑкӗсем тӑрӑх та, халӑх сӑмахлӑхӗнчи кӗнеке ҫинчен калакан халап-юмахсенчен те, чӗлхе материалӗсем тӑрӑх та аван пӗлетпӗр. Авалхи пӑлхар чӗлхинчи кӗнӳге сӑмах Атӑлҫи пӑлхарсен чӗлхинче кӗнӗв форма йышӑннӑ, каярахпа вӑл кӳнӗ евӗрлӗ илтӗнме тытӑннӑ. Атӑлҫи пӑлхарсенчен «кӗнеке» пӗлтерӗшлӗ кӗнӗв сӑмах ирҫе чӗлхине кӗнӗ. Хальхи ирҫе чӗлхинче конӗв сӑмах «хут», «ҫыру» тенине пӗлтерет.

Авалхи пӑлхар чӗлхинчех йӗркеленсе кайнӑ кӗнӳге сӑмах чӑваш чӗлхинче паян кунчченех сыхланса юлнӑ. Анчах та вӑл хӑйӗн малтанхи сасӑ кӳлепине те, пӗлтерӗшне те улӑштарнӑ. Чӑваш чӗлхин тури калаҫӑвӗнче пир тӑрӑхӗ ҫинче тӗрӗ йышӑнса тӑракан вырӑна конӗ, конь, куни теҫҫӗ. Тӑватӑ ура пуссипе эрешлесе тӗртнӗ сукнана чӑвашсем конӗллӗ тӑла тенӗ, куни тӗрри текен ятарлӑ кӑткӑс тӗрӗ эрешӗ те пур чӑвашсен, хӑшпӗр ҫӗрте ӑна ҫыру тӗрри теҫҫӗ. Н. И. Ашмарин словарӗнче конь сӑмаха ӑнлантарма ҫакнашкал тӗслӗхсем илсе кӑтартнӑ: ку сорпанӑн икӗ конь, конь хӗррине хурапа тунӑ. Ку сӑмахсене ҫапла ӑнланмалла: ку сурпан пуҫӗнче икӗ рет ҫыру тӗрри пур, тӗррин хӗррисене хура пурҫӑнпа тӗрлесе тухнӑ.

Историксемпе археологсем, этнографсемпе искусствоведсем чӑваш тӗррисен эрешӗсенче авалхи руна ҫырулӑхӗн паллисем сыхланса юлни ҫинчен нумай ҫырчӗҫ. Ҫавӑнпа та ку уҫӑмлӑ ыйтӑва сӳтсе явса тӑмасӑрах халӑх сӑмахлӑхӗн ҫӳпҫине уҫса пӑхар. Ҫӗр пин юрӑ хушшинче авалхи тӗрӗ ҫырулӑхӗ ҫинчен калакан юрӑсем те темӗн чухлех. Акӑ пирӗн ал айне Элӗк районӗнчи чӑвашсем юрланӑ юрӑ лекрӗ:

Шор ҫип кӗпи тӑхӑнтӑм —
Арки-ҫанни конь тӗрри:
Арки конне воларӑм та,
Пирӗн киле каймалла;
Ҫанни конне воларӑм та,
Тата пӑртак лармалла...

Ҫак авалхи хӑна юрри конӗ сӑмахӑн пӗлтерӗшне аван кӑтартать. Конӗ сӑмах «ҫырулӑх», «кӗнеке» сӑмахсене ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Чӗлхе историйӗ тӗлӗшӗнчен тишкерсе пӑхсан, конӗ сӑмахпа кӗнеке сӑмах пӗр кӑкран аталанса кайни палӑрать.

Конь, конӗ, куни формӑсем пирӗн чӗлхере хӑйӗнче авалхи кӳэнеке формӑран аталанса пулнӑ, кӗнеке форма чӑваш чӗлхине вырӑс чӗлхи урлӑ болгарсенчен килсе тухнӑ.

Ҫук, хӗрлӗ ӗне ҫисе ярайман иккен чӑвашӑн авалхи кӗнекине, вӑл асаннесен асамлӑ тӗррисенче пытанса юлнӑ!

Апла пулин те, чӑвашсен авалхи кӗнеки тата ҫырулӑх культури истори ҫулӗ ҫинче вӑхӑтлӑха татӑлнӑ пулнӑ. Чылай вӑхӑт хушши чӑвашсем кӗнекепе ҫырулӑхсӑр пурӑннӑ. Чӑвашсем ҫырулӑх культурине XIII ӗмӗрте, Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхне Ылтӑн Орда эшкерӗсем вутлӑ тӑвӑл пек килсе тустарнӑ саманара, ҫухатнӑ пулмалла. Унччен маларах пӑлхар-чӑвашсен кӗнекелӗх пулни истори документӗсенче палӑрса юлнӑ. Сӑмахран, Пӳлер хулинче пурӑннӑ Якуб ибн-Номан (Нуман Якӑпӗ) XII ӗмӗртех «Пӑлхарсен Историйӗ» ятлӑ кӗнеке ҫырса хӑварни паллӑ. Анчах чарусӑр вӑрҫӑ вучӗсемпе хаяр тӑшмансен алли ӑна пирӗн кунччен упранса юлма паман. Халӑх асӗнче ҫухалнӑ Аваллӑх кӗнеки ҫинчен калакан хурлӑхлӑ халап кӑна сыхланса юлнӑ.

Чӑвашсен пуҫ хулине — Пӳлере тутар патши Уксах Тимӗр виҫӗ уйӑх хупӑрласа тӑнӑ. Виҫӗ уйӑх татти-сыпписӗр ҫапӑҫусем пынӑ, анчах Уксах Тимӗр ҫарӗсем Пӳлер хулине ҫӗнсе илеймен. Тӑшман ҫарӗсем, шӑн ҫу ҫурти ҫунса ирӗлнӗ пек, чакса та чакса пынӑ. Ним тума аптраса ҫитнӗ Уксах Тимӗр ҫарпуҫсене хӑй патне пуҫтарать те вӗсене чӑваш ялӗсем тӑрӑх чаплӑ юмӑҫсем шырама кӑларса ярать. Нумай ҫӳренӗ тӑшман ҫарпуҫӗсем ялтан яла, юмӑҫран юмӑҫа. Анчах тӑван халӑхне никам та сутма килӗшмен. Юмӑҫсем халӑх ылханӗ айне пуличчен тӑшман хӗҫӗ айне пулма кӑмӑлланӑ.

Ҫӳресен-ҫӳресен, ылтӑнпа илӗртсе, вилӗмпе хӑратса, пӗр юмӑҫ карчӑка хӑйне май ҫавӑрнӑ-ҫавӑрнах тӑшман ҫарпуҫӗсем. Ҫав юмӑҫ карчӑка Уксах Тимӗр патне илсе пынӑ та вӑл вара Пӳлере мӗнле илмеллине вӗрентнӗ:

— Пӳлер уйне урлӑш утмӑл чалӑш, тӑршшӗ тӑхӑрвунӑ чалӑш йӗтем кас, йӗтем ҫине виҫҫӗр серепе ларт, сереписем хушшине сарӑ тулӑ сап. Вара Пӳлер хулинчи кӑвакарчӑнсем тулӑ ҫиме вӗҫсе анӗҫ те серепене ҫакланӗҫ. Эсӗ кӑвакарчӑн урисенчен чӗртнӗ ӑвӑпа кӗкӗрт ҫыхса яр та — вара мӗн пулнине хӑвах курӑн,— тенӗ юмӑҫ карчӑкӗ.

Уксах Тимӗр юмӑҫ вӗрентнӗ пек тунӑ. Виҫӗ уйӑх тӑшман хупӑрласа тӑнӑ Пӳлерте вӗҫенкайӑка тӑрантарма мар, ҫынсене ҫиме те нимӗн те юлман. Апат шыраса хире вӗҫсе тухнӑ кӑвакарчӑнсем тӑшман серепине лекнӗ. Вара тӑшмансем кӑвакарчӑн урисем ҫумне ӑвӑпа кӗкӗрт ҫыхаҫҫӗ те кайӑксене вӗҫтерсе яраҫҫӗ. Вутран шуйланнӑ кайӑксем хӑйсен йӑвисене вӗҫсе каяҫҫӗ. Ҫапла вара Пӳлер хулине пур енчен те вут хыпать.

Пӳлер хулинче Мелӗм хуҫа ятлӑ пӗр ватӑ ӑсчах пурӑннӑ. Вӑл чӑвашсен пурнӑҫне кӗнеке ҫине ҫырса пынӑ. Юмӑҫ карчӑк, тӑшмана сутӑнса, Пӳлере ҫунтарса янине те ҫырса хунӑ вӑл ҫав кӗнеке ҫине. Пӳлере талккишпех вут хыпса илсен, ватӑ ӑсчах хӑйӗн кӗнекине пайӑн-пайӑн уйӑрнӑ та халӑха салатса панӑ:

— Вӑрҫӑ-харҫӑ вӑхӑтлӑх, тӑнӑҫ пурнӑҫ ӗмӗрлӗх!— тенӗ вӑл. — Ҫак вӑрҫӑ вутӗнче пирӗн халӑхӑмӑр хӑй ӗмӗрӗнче мӗн курнине ҫырса пынӑ кӗнеке ҫунса ан кӗллентӗрччӗ тетӗп эпӗ. Ҫавӑнпа ҫак пурнӑҫ кӗнекине пайӑн-пайӑн салатса халӑха паратӑп. Пӳлер хулин юлашки кунӗ ҫитрӗ. Халь халӑх хуларан тарса саланӗ, тарӑн ҫырмасемпе вӑрман чӑтлӑхӗсене тарса пытанӗ. Кайран, ҫак ылханлӑ вӑрҫӑ вӗҫленсен, халӑх каллех пӗр ҫӗре пухӑнса тӑнӑҫ пурӑнма тытӑнӗ. Ун чухне ҫак саланнӑ кӗнекен пайӗсем те пӗр ҫӗре пухӑнӗҫ. Вара кам та пулин вӗсене пӗр ҫӗре пухса пӗр пысӑк кӗнеке тӑвӗ,— тенӗ те Мелӗм хуҫа, кӗнекене халӑха салатса панӑ.

Чӑвашсем вут хыпса илнӗ Пӳлер хулинчен тухса тарнӑ. Вӗсенчен чылайӑшне тӑшман ҫӗмренӗ тивнӗ, пайтахӑшӗ чуралӑха лекнӗ. Вилес умӗн аманнӑ чӑвашсем хӑйсен ҫумӗнчи кӗнеке пайӗсене ҫӗре чавса пытарнӑ. Тыткӑна лекнӗ ҫынсем, хӑйсен ҫумӗнчи кӗнеке татӑкӗсем тӑшман аллине лекесрен хӑраса, ҫыруне кӗпе-тумтир ҫине тӗрлесе илнӗ те хучӗсене ҫунтарса янӑ. Ҫапла вара чӑваш кӗнеки татӑкӑн-татӑкӑн сапаланса пӗтнӗ. Ӑна халь те никам та пӗр ҫӗре пуҫтарман-ха...

Ҫак илемлӗ халапа Куславкка районӗнчи Ырашпулӑх ялӗнче Дедушкина Домна Филипповнӑран 1972 ҫулта ҫырса илнӗччӗ. Унта халӑхӑмӑрӑн мал ӗмӗчӗ чӗрӗ ҫӑлкуҫ пек тапса тӑни тӗлӗнтерет. Ҫак халап пире халӑхӑмӑрӑн аваллӑхне ҫине тӑрса тӗпчеме хистесе тӑрать. «Ҫухалман чӑваш кӗнеки, вӑл кашни ҫын асӗнчех, кашни пусӑм ҫӗр лаптӑкӗнчех пирӗнпе юнашар пурӑнать. Шырӑр ӑна, пӗр ҫӗре пухса тӗпчӗр»,— тесе вӗрентсе каланӑн туйӑнать.

Кӗнеке... Пӗр сӑмах,ултӑ саспалли кӑна. Анчах та мӗн чухлӗ интереслӗ япаласем ҫинчен каласа парать вӑл! Унта пиншер ҫулхи аваллӑх та, тӗрлӗ халӑхсен хушшинчи ӗмӗртен пыракан хутшӑнусем те, паянхи пурнӑҫ та!

Ҫук, ҫухалман пирӗн кӗнеке. Ӑна темле ӗмӗтсӗр хӗрлӗ ӗне те ҫисе ярайман. Аслӑ вырӑс халӑхӗ пулӑшнипе чӑвашсем хӑйсен кӗнекине тепӗр хут ҫырма пуҫларӗҫ.

Кӗнеке яланах халӑхсен туслӑхне палӑртакан япала пулнӑ. Ӗмӗрсем хушшинче кӗнеке чӑвашсен мӑн аслашшӗсене китайсемпе, венгрсемпе, осетинсемпе, болгарсемпе, Атӑл тӑрӑхӗнчи кӳршӗллӗ халӑхсемпе, аслӑ вырӑс халӑхӗпе ҫыхӑнтарнӑ. Совет саманинче кӗнекен халӑхсем хушшинчи туслӑха ҫирӗплетес функцийӗ калама ҫук ӳссе кайрӗ. Халӗ чӑваш кӗнекине ҫӗре яхӑн чӗлхепе пирӗн ҫӗршывра та, чикӗ леш енче те вулаҫҫӗ.

Кӗнеке... Кӗске сӑмах, ултӑ саспалли кӑна. Анчах ҫак пӗр сӑмах — хӑех тем вӑрӑмӗш юмах.

Н. ЕГОРОВ,
Чӑваш АССР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи чӗлхе, литература, истори тата экономика ӑслӑлӑхӗсен тӗпчев институчӗн сотрудникӗ